27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
29
ЭРНЕКУН
254(6749) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет государстви ача амăшĕсемпе ачасемшĕн тăрăшни

Паян «Чăваш Коммуни» хаçатра нумай ачаллă амăшĕсене СССР Верховный Совет Президиумĕ ячĕпе наградăласси çинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ кăларнă Указ пичетленет.

Пирĕн ача амăшĕ-геронния ятне илнĕ Евдокия Ефимовна Ефимова хыççăн тата 59 амăшĕн кăкăрĕсене орденсемпе медальсем илемлетсе тăрĕç. Çав орденсемпе медальсем ача амăшĕсене нумай ача çуратса ÿстернĕшĕн пĕтĕм халăх тав тунине кăтартаççĕ. Тăван çĕршыв валли тÿрĕ кăмăллă темиçешер граждан пăхса ÿстернĕ çав амăшĕсен ячĕсене паян пĕтĕм халăх хисеплет.

Награда илнисем хушшинче Совет Союзĕн Геройĕсен амăшĕсем—Наталья Сергеевна Кабалина, Мария Николаевна Иванова тата Апполинария Осиповна Сапожникова пур. Тăхăршар ача çуратса ÿстернĕ вунă хĕрарăма «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă 1-мĕш степень орденпа наградăланă. Пăрачкаври колхозница Пелагея Васильевна Дубровина хăйĕн çичĕ ачи хушшинче сталинла сокола—Степана ÿстерсе çитĕнтернĕ. Степан халь, хăйĕн амăшĕ-амăшĕ илсе панă самолет çинче вĕçсе, тăшмана вирлĕн çапаçать. Çĕрпÿ хулинчи килхуçи хĕрарăмĕ Нина Петровна Матросова тата Комсомольски районри колхозница Анастасия Гордеевна Краснова фронта ултшар ача янă. Йышлă ачаллă чаплă хĕрарăмсем хушшинче учительница Клавдия Ивановна Горина, заводри работница Ольга Павловна Драгунова тата колхозницăсемпе служащисем те пур. Ача амăшĕн пархатарлă ĕçне туса пынипе пĕрлех вĕсем тылра ăнăçлăн ĕçлесе пурăнаççĕ, çапла вĕсем хăйсен Тăван çĕршыв умĕнчи патриотла тивĕçне чаплăн пурнăçласа пыраççĕ.

Ача амăшĕсемпе ачасемшĕн тăрăшасси тата çемьене çирĕплетессишĕн тăрăшасси яланах совет государствин чи пысăк задачисенчен пĕри пулнă. Большевиксен партийĕпе совет правительстви ача амăшĕсемпе ачасене право енчен те, пурлăх енчен те яланах пулăшса тăнă тата пулăшса тăраççĕ те. Çакна СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче кăларнă Указĕ—«Йывăр çын пулнă хĕрарăмсене, нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан амăшĕсене государство енчен пулăшассине ÿстерессн, ача амăшĕсен тата ачасен пурнăçне сыхлас ĕçе вăйлатасси çинчен, «Ача амăшĕ-геронния» тенĕ хисеплĕ ят тăвасси тата «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орденпа «Ача амăшĕсен медалĕ» ятлă медаль тăвасси çинчен» кăларнă Указĕ питĕ лайăх кăтартса парать. Нумай ачаллă амăшĕсене государство енчен пособи парса тăмалла тунă: икĕ ачаллă хĕрарăм, виççĕмĕш ачи çуралсан—пĕр вăхăтлăха 400 тенкĕ пособи илет; виçĕ ачаллă хĕрарăм тăваттăмĕш ачи çуралсан—пĕр вăхăтлăха 1.300 тенкĕ тата уйăхсерен 80-шар тенкĕ пособи илсе тăрать тата ытти те. Вунă ачаллă хĕрарăм çĕнĕрен çуратакан кашни ачашăн 5.000-шер тенкĕ илет, вăра кашни уйăхра 300-шер тенкĕ илсе тăрать. Çав закон тăрăх Чăваш республикинче декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне нумай ачаллă амăшĕсене 2.941 пин тенкĕ пособи тÿленĕ, çавăн пекех тата тăлăх пурăнакан хĕрарăмсене те нумай укçа панă. Йышлă ача учрежденийĕсем, ача çуратмалли çуртсем, хĕрарăм консультацийĕсем — çаксем пурте пирĕн ача амăшĕсемпе ачасене пулăшаççĕ.

Юлашкинчен, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн паян пичетленекен Указĕ 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнчи закона малалла пурнăçа кĕртни пулса тăрать. Парти организацийĕсен тата агитаторсемпе пропагандистсен паян пичетленекен Указа анлăн та тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Пирĕн вырăнсенчи совет органĕсен СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнчи Указне тĕплĕн пурнăçа кĕртмелле, ача амăшĕсене пособи илсе тăмалли хутсене часрах илме пулăшмалла, ĕçлекен амăшĕсем валли производствăра культурăпа йăла условийĕсем çителĕклĕ туса памалла, ача учрежденийĕсемпе сывалмалли учрежденисене кăтартуллăн ĕçлеттермелле.

Ача амăшĕсемпе ачасемшĕн тăрăшни вăл пирĕн аслă çĕршывăн чаплă пуласлăхĕшĕн тăрăшни пулать. Совет, парти, профсоюз, хуçалăх организацийĕсен государствăн çак питĕ кирлĕ задачине пурнăçласси çине кулленех тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, ача амăшĕсемпе ачасемшĕн пирĕн çулпуçăмăр аслă Сталин вĕрентнĕ пек тăрăшмалла.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче те партипе правительство ача амăшĕсемпе ачасемшĕн нумай тăрăшаççĕ, вĕсем валли укçа нумай уйăрса параççĕ, вĕсене вăрçă пирки тухса тăнă йывăрлăхсене сирсе яма пулăшаççĕ, нумай ачаллă хĕрарăмсене пĕтĕм халăх хисепĕпе хисеплеççĕ. Çак Сталинла аслă политика çине совет патриотĕсемпе патриоткисем фронтра та, тылра та çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе ответлĕç, тăшмана татăклăн çĕнтерессишĕн, хамăр ачасен савăнăçлă пуласлăхĕшĕн, пирĕн çав тери илемлĕ çĕршывăн хăвачĕшĕн, ăна чечеклентерсе ÿстерессишĕн тата вăйлăрах кĕрешĕç!

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Нумай ачаллă амăшĕсене „Ача амăшĕн мухтавĕ" ятлă орденсемпе тата „Ача амăшĕсен медалĕ" ятлă медальсемпе наградăласси çинчен

СССР Верховный Совет Президиумĕ 1944 çулхи августăн 18-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх, СССР Верховный Совет Президиумĕ ячĕпе çаксене наградăлас:

Тăхăр ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене

«АЧА АМĂШĔН МУХТАВĔ» ЯТЛĂ I-МĔШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Мария Сергеевна **Ермаковăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Тури Упакасси ял Советĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.
2. Анисия Ивановна **Ершовăна** — Куславкка районĕнчи Мушар ял Советĕнчи «Спартак» колхоз колхозницине.
3. Матрена Ивановна **Ивановăна**—Красноармейски районри Упи ял Советĕнчи «Коминтерн» колхоз колхозницине.
4. Селеби Каримовна **Каримовăна**—Тăвай районĕнчи Чÿкçырми ял Советĕнчи «Коммунар» колхоз колхозницине.
5. Вера Алексеевна **Климовăна**—Улатăр районĕнчи Стемас ял Советĕнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницине.
6. Евдокия Федоровна **Корчагинăна** — Комсомольски районри «Красный маяк» колхоз колхозницине.
7. Анна Павловна **Максимовăна**—Çĕмĕрле хулинчи килхуçи хĕрарăмне.
8. Гликерия Николаевна **Маковăна** — Комсомольски районри Комсомольское ялĕнчи килхуçи хĕрарăмне.
9. Перасковья Сергеевна **Михайловăна**—Калинино районĕнчи Кÿлхĕрри ял Советĕнчи «Трактор» колхоз колхозницине.
10. Анна Павловна **Павловăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Паникасси ял Советĕнчи «Первое Мая» колхоз колхозницине.

Сакăр ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене

«АЧА АМĂШĔН МУХТАВĔ» ЯТЛĂ II-МĔШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Серафима Лукояновна **Богдановăна**—Сĕнтĕр районĕнчи Хачăк ял Советĕнчи «Коминтерн» колхоз колхозницине.
2. Екатерина Сергеевна **Воложиновăна**—Улатăр районĕнчи Иваньково-Ленински ял Советĕнчи «Красный луч» колхоз колхозницине.
3. Александра Федоровна **Золотовăна** — Шупашкар хулинчи килхуçи хĕрарăмне.
4. Анастасия Игнатьевна **Игнатьевăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Тури Упакасси ял Советĕнчи «Трактор» колхоз колхозницине.
5. Наталия Сергеевна **Кабалинăна**—Канаш хулинчи килхуçи хĕрарăмне.
6. Татьяна Николаевна **Кирилловăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуркасси ял Советĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.
7. Анастасия Гордеевна **Красновăна** — Комсомольски районри Нĕркеç ял Советĕнчи Шмидт ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.
8. Минхаят Гибатдиновна **Куштабаевăна**—Комсомольски районри Урмай ял Советĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.
9. Матрена Григорьевна **Львовăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Тури Упакасси ял Советĕнчи «Трактор» колхоз колхозницине.
10. Варвара Матвеевна **Прокопьевăна** — Калинино районĕнчи Калинино ял Советĕнчи «1-ое Мая» колхоз колхозницине.
11. Лукерья Ивановна **Рогожкинăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуркасси ял Советĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.
12. Елена Константиновна **Сорокинăна** — Куславкка районĕнчи Куславкка поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмне.
13. Анисия Тимофеевна **Тимофеевăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Тури Упакасси ял Советĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

Çичĕ ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене

«АЧА АМĂШĔН МУХТАВĔ» ЯТЛĂ III-МĔШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Евдокия Алексеевна **Алексеевăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Уплер ял Советĕнчи «1-ое Мая» колхоз колхозницине.
2. Анна Исаевна **Архиповăна**—Канаш районĕнчи Сухайкасси ял Советĕнчи «Шихраны» колхоз колхозницине.
3. Клавдия Ивановна **Горинăна**—Красноармейски районри Упи вăтам шкулĕнчи учительницăна.
4. Екатерина Петровна **Грачевăна**—Сĕнтĕр районĕнчи Мăн Сĕнтĕр ял Советĕнчи «Новый путь» колхоз колхозницине.
5. Пелагея Васильевна **Дубровинăна** — Пăрачкав районĕнчи Никулино ял Советĕнчи «Красный пахарь» колхоз колхозницине.
6. Ольга Дмитриевна **Емельяновăна** — Калинино районĕнчи Калинино ял Советĕнчи «1-ое Мая» колхоз колхозницине.
7. Мария Николаевна **Ивановăна** —Вăрнар поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмне.
8. Анна Федоровна **Красиловăна**—Сĕнтĕрвăрри хулинчи килхуçи хĕрарăмне.
9. Анна Прокофьевна **Кузинăна**—Улатăр районĕнчи Засурско-Безднински ял Советĕнчи «Красное Анютино» колхоз колхозницине.
10. Пелагея Григорьевна **Матвеевăна** — Улатăр районĕнчи Ямско-Посадски ял Советĕнчи «Заветы Ильича» колхоз колхозницине.
11. Нина Петровна **Матросовăна**—Çĕрпÿ хулинчи килхуçи хĕрарăмне.
12. Клавдия Семеновна **Мочаловăна** — Шупашкар хулинчи килхуçи хĕрарăмне.
13. Ульяна Захаровна **Мышкинăна**—Комсомольски районри Комсомольское ялĕнчи килхуçи хĕрарăмне.
14. Матрена Вастуловна **Пимулинăна**—Тăвай районĕнчи Йăнтăрч ял Советĕнчи «Октябрь» колхоз колхозницине.
15. Пелагея Алексеевна **Раевскаяна** — Куславкка районĕнчи Варасăр ял Советĕнчи «Правда» колхоз колхозницине.
16. Дария Савельевна **Савельевăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Тури Упакасси ял Советĕнчи «Трактор» колхоз колхозницине.
17. Александра Тимофеевна **Смирновăна**—Комсомольски районри Эткел ял Советĕнчи «Новая жизнь» колхоз колхозницине.

Ултă ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене

«АЧА АМĂШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛĂ I-мĕш СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Мария Сергеевна **Адамовăна** — Комсомольски районри «Красный маяк» колхоз колхозницине.
2. Марина Семеновна **Антоновăна** — Тăвай районĕнчи Йăнтăрч ял Советĕнчи «Пламя» колхоз колхозницине.
3. Ольга Павловна **Драгуновăна** — Шупашкар хулинчи пĕр завод работницине.
4. Надежда Павловна **Елинкинăна** — Комсомольски районри «Большевик» колхоз колхозницине.
5. Елизавета Никандровна **Морозовăна**—Шупашкар хулинчи килхуçи хĕрарăмне.
6. Надежда Осиповна **Пименовăна** Куславкка районĕнчи Воробьевка ял Советĕнчи «Большевик» колхоз колхозницине.
7. Евгения Спиридоновна **Спиридоновăна**—Красноармейски районри Упи ял Советĕнчи «Коминтерн» колхоз колхозницине.
8. Матрена Абрамовна **Степановăна** — Вăрнар поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмне.
9. Пелагея Федоровна **Царевăна** — Улатăр районĕнчи Явлей ял Советĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

Пилĕк ача çуратса пăхса ÿстернĕ амăшĕсене

«АЧА АМĂШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛĂ II-мĕш СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Агафия Дмитриевна **Арефьевăна** — Улатăр районĕнчи Ямско-Посадски ял Советĕнчи «Прогресс» колхоз колхозницине.
2. Мария Григорьевна **Горшковăна** — Калинино районĕнчи Калинино ял Советĕнчи «Искра» колхоз колхозницине.
3. Анна Тимофеевна **Кирилловăна** — Вăрнар районĕнчи Ершалуç ял Советĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.
4. Ольга Матвеевна **Красновăна** — Комсомольски районри Комсомольское ялĕнчи килхуçи хĕрарăмне.
5. Екатерина Матвеевна **Матвеевăна** — Красноармейски районри Упи ял Советĕнчи «Коминтерн» колхоз колхозницине.
6. Татьяна Павловна **Осиповăна** — ВКП(б) Комсомольски райкомĕнче ĕçлекенскерне.
7. Анастасия Николаевна **Разумовăна** — Çĕрпÿ районĕнчи Çырмапуç ял Советĕнчи «Дружба» колхоз колхозницине.
8. Апполинария Осиповна **Сапожниковăна** — Шупашкар хулинчи килхуçи хĕрарăмне.
9. Александра Петровна **Турхановăна** — Тăвай районĕнчи Чÿкçырми ял Советĕнчи «Коммунар» колхоз колхозницине.
10. Анастасия Ивановна **Чернышевăна** — Куславкка районĕнчи «Труд» колхоз колхозницине.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕ.

АРКТИКА ВАЛЛИ СПЕЦИАЛИСТСЕМ ХАТĔРЛЕÇÇĔ

Главсевморпутĕн Гидрографи институтĕнче вĕренÿ тата наукăпа тĕпчев ĕçĕсем кăçал нумай вăйланнă. Темиçе çĕр студент Арктикăна кайма хатĕрленеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ ятарласа тунă базăра практика ирттереççĕ. Çав шутпа вăл базăна гидрографи карапĕсем уйăрса панă. Институт çумĕнче метеорологипе çурçĕрте сыхăну тытма вĕрентекен шкул уçнă. Кунта 230 çын вĕренет, вĕсем хушшинче Отечественнăй вăрçăра пулнă çынсем нумай. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 26-мĕшĕнче ВЕНГРИРЕ пирĕн çарсем ДЬЕНДЬЕШ хулинчен çурçĕртерехре ШАЛГО-ТАРЬЯН хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, МАДЬЯР-ЗАБАР, ФЕЛЬШЕ УТАШ, АЛШО-УТАШ БАРАТОНЬ, ЗАБАР, ЦЕРЕД, БАРНА, РОНА, ИНАСО, АЛШО-ПАЛФАЛВА, ФАЛШЕ-ПАЛФАЛВА, БАГЛИА-ШАЛЬЯ, КИШ-ХАРТИАН, ШОШ-ХАРТИАН, МЕДЬЕР ялĕсене тата АЛШО-ПАЛФАЛВА чугун çул станцине йышăннă. Декабрĕн 24-мĕшĕпе 25-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем ку районра нимĕçсемпе венгерсен 960 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

ЧЕХОСЛОВАКИРЕ, ШАХЫ хулинчен çурçĕр-хевеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă, вăл шутра—ШАЛМОШ, ЧАЙКОВ, РЫБНИК, ВЕЛИКИЕ КОЗМАЛОВЦЕ, ТЕКОВ, КЛЕЧАНИ, ГОРНЫЙ СЕШ, ТРОН шывĕ çинчи СВЯТОЙ ЮРИЙ, ТРГИНЯ, ЛОНТОБ, ШАЛОВ, МАЛЫЕ ЛУДИНЦЕ, ЗАЛАБА ялĕсем тата КОЗМАЛОВЦЕ, ЗАЛАБА чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, БУДАПЕШТ хулине хĕвеланăçĕнчен çавăрса илмелли наступление вăйлатса пырса, ДУНАЙ шывĕ çине тухнă. ЕСТЕРГОМ хулипе чугун çул станцине тата ДОРОГ ТАТ ялĕсемпе чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. Çапла фронт çарĕсем тăшманăн БУДАПЕШТРИ группировкине пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ. Фронт çарĕсем, тăшманпа çапăça-çапăça, БУДАПЕШТАН хĕвеланăç хĕрринчи БУДАФОК, БУДАЕРШ, ЗУГЛИГЭТ, ПИПОТНЕЗЕ, ХАРШАКАЛЯ, ПЕШТХИДЕГКУТ, ПИЛИШВЕРЕШВАР, ПИЛИШБОРОШЕНЭ, ЮРЕМ поселокĕсене, ЧОВАНКА, ПОМАЗ, КЕСТЕЛЦ, БАЙНА, ТАРЯН, ВЕРТЕШШАМЛО, ОРОСЛАНЬ, ЧАКВАР ятлă ялсене тата ПИЛИШВЕРЕШВАРПА СААР чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

Декабрĕн 25-мĕшĕнчи çапăçусенче БУДАПЕШТ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсемпе венгерсен 2.340 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ, тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Декабрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 48 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 27 самолетне персе ÿкернĕ.

ДЕКАБРĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 27-мĕшĕнче ЧЕХОСЛОВАКИРЕ пирĕн çарсем ШАХЫ хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшманпа çапăçса КОЛАРИ, ВЕЛИКАЯ ЧАЛОМИЯ, КОСИГИ, БАЛОГ, ВЕЛИКАЯ ВЕС, СЕЧЕНКИ, НЕКИЯ, КЛЕНЯНИ ялĕсене тытса илнĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах ШАХЫ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ИПЕЛЬ шывĕпе ГРОН шывĕ хушшинчи района тăшмантан тасатас тĕлĕшпе ăнăçлăн çапăçнă. Декабрĕн 26-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем ку районра 1.510 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

БУДАПЕШТ хули районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. БУДАПЕШТ хули хĕрринче ДУНАЙ шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче ларакан ЧЕМЕР, МАГЛОД, ЕЧЕР, ВЕЧЕШ ятлă поселоксене тата ДУНАЙ шывĕн хĕвеланăç хĕрринче ларакан КЕЛЕНФЕЛЬД, БУДАКАЛАС, БЕКАШМЕДЬЕРЕ ятлă поселоксене, çавăн пекех тата ПИЛИШСАНТО, ИЗБЕГ, СЕНТЕНДРЕ ялĕсене туртса илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем БУДАПЕШТ хулинчен çурçĕртерехре ДУНАЙ шывĕн хĕвелтухăçĕнчи юппи урлă каçнă та унти утрава тата утрав çинчи ТОТФАЛУ, ПОЧМЕДЬЕР, СИГЕТМОНОШТОР ятлă ялсене туртса илнĕ, ДУНАЙ шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи СЕНТЕНДРЕ поселокне туртса илнĕ чаçсемпе пĕрлешнĕ. Çапла вара, малалла наступлени туса пырса, пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине икĕ пая уйăрнă, çав пайсенчен пĕрне ДУНАЙ шывĕн БУДАПЕШТ хулинчен çурçĕртерехри кукринчи сăртлă-вăрманлă района хăваласа кĕртнĕ, тепĕр пайне БУДАПЕШТ хулинче хĕстерсе лартнă. Декабрĕн 26-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче БУДАПЕШТ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата хĕвеланăçнерехри районра пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 2.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Секешфехервар хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем, тăшманпа хытă çапăçса, сăртлă-вăрманлă района гитлеровецсенчен тасатнă. ФЕЛЬШЕ ГАЛЛА хулипе чугун çул станцине, НЬЕРГЕШУЙФАЛУ, БАЙОТ, ЛАБАТЛАН, ПИСКЕ, ШЮТТПЕ, ТАРДОШ, ТОЛНА, ТАТАБАНЬЯ, БАНХИДА, КЕХАНЬЯШ, КАПОЛНАПУСТА, ГАНТ, ЧАГБЕРЕНЬ ялĕсене тата НЬЕРГШУЙФАЛУ, ШЮТТПЕ чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ, тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Декабрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 74 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 23 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире, Шахы хулинчен хĕвелтухăçнерехре, пĕр соединени чаçĕсем çапăçса малалла куçса пынă, темиçе ял туртса илнĕ. Нимĕçсенчен 9 тупă, 34 пулемет тата 3 боеприпас складне тытса илнĕ. Шахы хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем юлашки çапăçусенче тăшман группировкине йывăр поражени ÿстерне, халĕ вĕсем Ипель шывĕпе Грон шывĕ хушшинчи района гитлеровецсенчен тасататассишĕн ăнăçлăн çапăçаççĕ. Совет танкĕсем нимĕçсем тăракан вырăна татса кĕрсе кайнă та вĕсен артиллери позицийĕсене, склачĕсене тата темиçе штабне аркатса тăкнă.

* * *

Будапешт хули районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. Тыткăна лекнисем каласа кăтартнă тăрăх, нимĕçсен командованийĕ хăйĕн çарĕсене юлашки салтак юлмиччен хирĕç тăма приказ панă. Будапешт хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре совет чаçĕсем артиллери персе хатĕрленĕ хыççăн тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ позицийĕсене атакăланă. Хаяр çапăçура пирĕн пехотинецсем пилĕк рет траншея, икĕ рет пралук карти тата минăсем лартса тухнă икĕ участок урлă каçса кайнă. Пирĕн çарсем, тăшмана вăйлăрах та вăйлăрах пырса çапса, нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене Маглод, Ечер тата Вечеш поселокĕсене туртса илнĕ. Вечеш поселокĕ Будапешт хулинчен 12 километрта ларать. Çавăн пекех тата нимĕçсене Будапешт хулинчен 8 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Чемер поселокĕнчен те хăваласа кăларнă.

Будапешт хулин хĕвеланăç хĕрринче вăйлă çапăçусем пынă. Гитлеровецсем унти чул çуртсенчен персе тăмалли вырăнсем тунă та хăйсен мĕнпур юлашки вăйĕпе хирĕç тăрса çапăçаççĕ. Совет боецĕсем çурт хыççăн çурта, квартал хыççăн квартала штурмласа туртса илеççĕ. Пирĕн ытти чаçсем тăшман оборонине татнă та Будапешт хулинчен темиçе километр çурçĕртерехре Дунай шывĕ çине тухнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах совет çарĕсем Дунай шывĕн хĕвелтухăçĕнчи юппи урлă каçнă та унти утрава йышăннă, вара Дунай шывĕн хĕвеланăç хĕрринче кĕрешекен чаçсемпе сыхăну тытма пуçланă. Çапла ĕнтĕ, пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ Будапешт тавраşĕнчи группировкине икĕ пая уйăрса янă. Халĕ çав икĕ пайне те пĕтерсе тăкассишĕн хаяр çапăçусем пыраççĕ. Çапăçусенче нимĕçсем пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, кун каçиччен 3.000 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 55 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Пирĕн çарсем нимĕçсенчен 24 танк, 28 тупă, понтон паркĕ, хĕçпăшал тата вăрçă япалисем нумай тытса илнĕ.

Енер Естергом хулине йышăннă чухне пирĕн чаçсем 50 бронетранспортер, 5 чугун çул эшелонĕ, 14 паровоз, темиçе пысăк склад тата ытти трофейсем тытса илнĕ.

* * *

Секешфехервар хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем Вэртэшхедьшэг ятлă вăрманлă ту урлă каçнă та, çав тери хăвăрт атакăласа, Фельше Галла ятлă промышленноçлă хулана туртса илнĕ. Пирĕн Дунай шывĕн кăнтăр хĕррипе хĕвеланăçнелле наступлени туса пыракан ытти чаçсем çапăçса 14 километр малалла кайнă. Пĕр районра совет кавалерисчĕсем тăшман тылне татса кĕрсе кайнă та икĕ кун хушшинчи çапăçусенче гитлеровецсене пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн авиаци, çанталăк начар тăнине пăхмасăрах, тăшманăн çапăçури çарĕсене тата тăшман тылне пыра-пыра çапнă. Летчик-истребительсем Скоморохов капитанпа Филиппов кĕçĕн лейтенант нимĕçсен 30 самолетне хирĕç çапăçнă. Аста маневрсем туса, Скоморохов капитан тăшманăн икĕ истребительне персе ÿкернĕ. Нимĕç бомбардировщикĕсем хăйсен бомбисене хăйсен çарĕсем çинех пăрахнă та тарса пытанма хăтланнă. Филиппов кĕçĕн лейтенант, тăшмана хăваласа пырса, унăн икĕ бомбардировщикне персе ÿкернĕ.

* * *

Чехословакире Кошице хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн подразделенисем хăйсен позицийĕсене лайăхлатассишĕн çапăçнă. Совет пехотинецĕсем, артиллерисчĕсем тата минометчикĕсем тăшмана атакăланă та çав секторта пуç пулса тăракан икĕ çÿллĕ вырăна йышăннă. Кучер лейтенантăн штурмлакан ушкăнĕ тăшман траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă та гитлеровецсен ушкăнне вĕлерсе пĕтернĕ. Горохов рядовой, гранатăсем вăркăнтарса, нимĕçсен хăй тĕллĕн çÿрекен туппине сирпĕнтерсе янă. Скоба ефрейтор 14 нимĕçе автоматпа персе вĕтернĕ.

Совет Союзĕн Геройĕ А. Кочетов

Чăваш ĕççыннийĕсен укçипе тунă самолетсене летчиксене пани

Декабрĕн 20-мĕшĕнче Дорошенко подполковник командир пулса ертсе пыракан чаçре Чăваш ĕççыннийĕсен укçипе тунă 12 боевой самолета фронтовиксене панă.

Самолетсене пама чаçе Чăваш республикин делегацийĕ пынă. Делегацире Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ Гаязов юлташ, Улатăр хулинчи депо машинисчĕ Кузнецов юлташ, ВКП(б) Улатăр райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Резепкин юлташ пулнă.

Самолетсем панă чухне чаçăн пĕтĕм составĕ стройпа йĕркеленсе тăнă.

Митинга, кĕске те ăшă сăмах каласа, подполковник Дорошенко юлташ уçнă.

Ун хыççăн Резепкин юлташ тухса каланă, вăл чаçри командирсемпе летчиксене орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисенчен салам каланă.

Колхозник-патриот Абдул Гаязов хĕрÿллĕ сăмах каланă. «Сирĕн чаçре,—тенĕ вăл,—пирĕн мухтавлă земляк Совет Союзĕн Геройĕ А. Кочетов юлташ пур. Эпĕ ăна валли хамăн укçапа самолет туянтăм».

Часть командирĕсемпе летчикĕсен ячĕпе полк командирĕн заместителĕ майор Гулин ответлă сăмах каланă.

Çакăн хыççăн самолетсене парас ĕç пуçланнă. Совет Союзĕн Геройне А. Кочетова икĕ самолет панă: пĕрне Гаязов укçипе, тепĕрне Улатăр хулинчи ĕççыннисен укçипе тунă.

Чăваш ĕççыннийĕсен укçипе тунă самолетсене илнĕ часть нимĕçсен 400 самолетне яхăн персе ÿкернĕ, унăн икĕ летчикне Совет Союз Геройĕн ятне панă, ыттисене пурне те СССР орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Пирĕн земляк Совет Союзĕн Геройĕ А. Кочетов хăй пĕччен 34 самолет, ушкăнпа çапăçса 8 самолет персе ÿкернĕ.

Самолетсем панине Кинохроника бригади кино çине ÿкерсе илнĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн „Республикăри малта пыракан ял Советне" ятлă куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне парасси çинчен

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн «Республикăри малта пыракан ял Советне» ятлă куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне, халиччен Елчĕк районĕнчи Сĕрĕел ял Советĕнче пулнăскерне, 1944 çулхи ĕçсен итогĕсем тăрăх Куславкка районĕнчи Аманик ял Советне парас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар. 1944 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕ.

ПИРĔН ЧАПЛĂ ЗЕМЛЯК П. КАРИКОВ ХĂЙĔН ТĂВАН ЯЛĔНЧЕ

Чкаловски районри Чăваш Сăкăчĕ ялне пирĕн чаплă земляк—I-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш степень Мухтав орденĕн кавалерĕ гварди кĕçĕн лейтенанчĕ П. Кариков таврăннă. П. Кариков юлташ хăй вĕрентнĕ шкулта тата колхоз активĕн канашлăвĕнче пулнă. Ăна пур çĕрте те ăшшăн кĕтсе илнĕ. Çитес кунсенче вăл каллех фронта тухса каять.

СССР Совнаркомĕнче

ССР Союзĕн Совнаркомĕ 1945 çулхи январĕн пĕрремĕшне канмалли кун тума

Тырпулшăн кĕрешни—çĕнтерӳшĕн кĕрешни!

Хĕрлĕ Çар фондне харпăрхăй запасĕнчен тырă парас ĕçе активлăн хутшăнар!

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Çĕрпӳ тата Шупашкар районĕсенчи колхозниксен паха пуçарăвне пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем йышă кăмăлпа йышăнса илчĕç. Пур колхозсенче те халĕ пухусем пулса иртеççĕ. Хĕрлĕ Çар фондне тырă парасси анлăн сарăлса пырать. Тулли мар даннăйсем тăрăх, паян тата ĕнер хатĕрлев пунктне 550 пăт тырă кайнă, ăна пĕтĕмпех колхозниксен харпăрхăй запасĕнчен панă. Хĕрлĕ Çар фондне тырă парас ĕçе, МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем те анлăн хутшăнаççĕ. МТС-ра çак ыйтупа ятарласа пуху пулса иртнĕ. МТС-ри чаплă трактористка А. Владимирова юлташ хăй ĕçлесе илнĕ тырăран 11 пăт Хĕрлĕ Çар фондне пама пулнă. Ун хыççăн ытти трактористсемпе трактористсемпе трактористкăсем те Тракторист П. Владимиров 11 пăт, М. Семенов—10 пăт, Е. Иванова—10 пăт, Я. Васильев 9 пăт панă. Çак тырра пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне ăсатнă.

Н. ГЛАДКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ, декабрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар фондне тырă парас тĕлĕшпе кашни колхозрах пухусем пулса иртеççĕ. «Красное Сормово», «Молния» тата «Культура» колхозсен членĕсем хăйсен запасĕнчен тырă пама пуçланă. «Красное Сормово» колхозран паянхи кун тĕлне хатĕрлев пунктне 50 пăт ытла тырă янă.

* * *

ЕЛЧĔК. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çар валли ытларах тырă пани çĕнтерӳ кунне çывхартать. Çакна пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем лайăх ăнланаççĕ. Аслă Пăла Тимешĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра пуху пулса иртрĕ. Унта Хĕрлĕ Çар фондне тырă парасси çинчен сӳтсе яврĕç. Колхозниксем, пĕр кăмăллă пулса, колхоз фондĕнчен 215 центнер тырă пама йышăнчĕç. Нумай колхозниксем хăйсен запасĕнчен Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ. Колхоз председателĕ Зайцев юлташ 30 пăт, фермăри сурăхсене пăхакан Емельянов юлташ 21 пăт, фронтовик арăмĕ М. Лаврентьева юлташ 21 пăт, Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ С. Емельянов юлташ 16 пăт, конюх Емельянова юлташ 24 пăт, колхоз счетоводĕ, Отечественнăй вăрçă инвалиде А. Козлов юлташ 25 пăт тырă пама пулнă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пурĕ 1920 пăт тырă Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă, вăл тырра хатĕрлев пунктне леçсе панă та ĕнтĕ.

Районри ытти колхозсенче те халĕ пухусем пулса иртеççĕ, унта Хĕрлĕ Çар фондне тырă парасси çинчен пысăк çĕкленӳпе сӳтсе яваççĕ.

С. МАКАРОВ.
ВКП(б) Елчĕк райкомĕн секретарĕ.

* * *

МУРКАШ, декабрĕн 28-мĕшĕ (Телефонпа). Паян районри ялсоветсемпе колхозсен председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ВКП(б) райкомĕн секретарĕ В. Ильин юлташ Хĕрлĕ Çарăн фронтри чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен доклад туса пачĕ тата Çĕрпӳпе Шупашкар районĕнчи колхозниксем хăйсен запасĕнчен Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывас ĕçе пуçарса яни çинчен пĕлтерчĕ.

Халĕ кашни колхозрах колхозниксен пухăвĕсем пулса иртеççĕ, унта Хĕрлĕ Çар фондне тырă парас ыйтăва сӳтсе яваççĕ.

«Свобода» колхозра çак тĕлĕшпе пуху пысăк çĕкленӳпе пулса иртнĕ. Пухăва пуçтарăннă колхозниксем хăйсен запасĕнчен 480 пăт пама йышăннă. Колхоз председателĕ Петровский юлташ 20 пăт, колхозри сыснасене пăхакан Семенов юлташ 26 пăт, колхоз бригадирĕсем Краснова, Бычкова, Степанова, Матвеева юлташсем кашниех 5-шер пăт, колхозник С. Цаплин 5 пăт пама пулнă.

Тулли мар даннăйсем тăрăх, районри колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар фондне 5.000 пăт ытла пама пулнă. Вăл тырра леçес тĕлĕшпе декабрĕн 31-мĕшĕнче кашни колхозрах воскресник тума йышăннă. 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăннă тырра государство склачĕсене леçсе пĕтерессишĕн кашни колхозрах ăмăртса ĕçлеççĕ.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçри

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне тракторсене юсаса пĕтеретпĕр

ЧКАЛОВСКОЕ, декабрĕн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Украина ССР-ĕнчи Сталино облаçĕнчи Старо-Бешевски МТС коллективĕ чĕнсе каланине пирĕн трактористсемпе трактористкăсем тĕплĕн сӳтсе яврĕç. Пирĕн МТС IV-мĕш кварталта тракторсене юсамалли плана ытлашшипех тултарчĕ. Паянхи кун тĕлне 18 трактор юсаса пĕтернĕ. Эпир 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 21 трактор юсаса пĕтерме обязательство илтĕмĕр. Константинова, Шитова, Коновалова юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем хăйсен мĕнпур тракторĕсенчен 66 процентне юсанă. Кварталти плана вĕсем 200 процент тултарчĕç.

Старо-Бешевски МТС трактористĕсемпе трактористкисем чĕнсе каланине сӳтсе явнă хыççăн пирĕн коллектив мĕнпур тракторсене тата кăкарса ĕçлемелли машинăсене февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме обязательство илчĕ. Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн халĕ пирĕн коллектив çине тăрса ĕçлет.

Ф. АРХИПОВ.
Чкаловски МТС директорĕ.

27 трактор юсанă

ЕЛЧĔК (Телефонпа). МТС IV-мĕш кварталта тракторсене юсамалли плана ытлашшипех тултарнă. 25 трактор вырăнне 27 трактор юсанă.

17-мĕш бригада (бригадирĕ Спиридонов юлташ) хăйĕн тракторĕсене веçех юсаса пĕтернĕ. 1-мĕш бригада та 5 трактортан тăваттăшне, 14-мĕш бригада 4 трактортан виççĕшне юсанă. Вĕсемсĕр пуçне 34 трактор плугне, 12 сеялкăна юсаса пĕтернĕ. Анчах та 9-мĕшпе 16-мĕш бригадăсем (бригадирĕсем Васильевпа Указов юлташсем) çак вăхăта çитсе те пĕр трактор та юсаман. 16-мĕш бригадăн тракторĕсем халĕ те колхозсенчех лараççĕ.

МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем Украина ССР-ĕнчи Сталино облаçĕнчи Старо-Бешевски МТС коллективĕ чĕнсе каланине сӳтсе явнă хыççăн 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 45 трактор юсаса пĕтерме обязательство илнĕ.

Районри коммунистсен пухăвĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Çак кунсенче кунта районри коммунистсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура районри коммунистсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тата районри промышленноçра мĕнле ĕçлени çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Григорьев юлташ доклад туса пачĕ. Доклад тăрăх пренире 14 çын тухса каларĕç. Вĕсем хальхи вăхăтра çуракине хатĕрленес енĕпе район çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. Уйрăмăнах вăрлăх хатĕрлесе сортласси колхозсенче çителĕксĕр пырать. Иртнĕ çуйăхра пулса иртнĕ районри пуху декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне вăрлăхсене сортласа пĕтермелле, вĕсен шăтаслăхне тĕрĕслес ĕçе вĕçлемелле, тесе йышăннăччĕ. Анчах та çак решение чылай организацисем пурнăçламан. Районри 88 колхозран 20 колхозра кăна вăрлăхсене сортласа çитернĕ. Вăрлăхсен шăтаслăхне тĕрĕслесси те начар пырать. Мартынкасси, Мăн Шетмĕ, Кушар тата ытти хăшпĕр ялсоветсене кĕрекен колхозсенче вăрлăхсене сортлас ĕçе пуçăнман. Кунта тырă тасатмалли машинăсем те пур, анчах та вĕсемпе усă курмаççĕ, çавра аласемпе аласине тата вăрлăха алăпа суйлассине организацилемен.

Юлашки вăхăтра районри промышленность лайăх ĕçлерĕ. Крахмал заводĕ хăйĕн çулталăк планне октябрь уйăхĕнчех 110 процент тултарнă. Райпромкомбинат та хăйĕн çулталăкри программине ноябрьте 112 процент тултарнă. Çу заводĕ хăйĕн планне 94 процент, «Комсомол» ятлă промысла артелĕ 128 процент тултарнă. Çак предприятисенче Сталин юлташ докладне вĕренессине лайăх организациленĕ, доклада вĕренес ĕçе мĕнпур рабочисемпе работницăсене явăçтарнă.

Анчах та «Трудовик», Ворошилов ячĕпе тăракан промысла артелĕсенче тата кирпĕч заводĕнче рабочисем хушшинче массăллă ăнлантарулла ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен, кунта социализмлă ăмăртăва сарса яман.

Сталин юлташ докладĕпе приказне вĕренесси районра ăнăçлă пырать. коммунистсем, комсомолецсем тата партире тăман ĕççынисем çав документсене пысăк çĕкленӳпе вĕренеççĕ. Сталин юлташăн докладне вĕренес майпа районра 10 кружок ĕçлет.

Коммунистсен районри пухăвĕ тивĕçлĕ решени йышăнса хăварчĕ.

С. ШАДИН.

Вăкăрсене кӳлме вĕрентеççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. «Красный Тоганаш» колхозра майрăкаллă шултăра выльăхсене кӳлме вĕрентсе, туртăм вăйне нумайлатма тăрăшаççĕ. Колхоз правленийĕ вăкăрсене кӳлме вĕрентес тĕлĕшпе ятарласа çынсем уйăрнă. Вăл çынсене кӳлме вĕрентмелли вăкăрсене çирĕплетсе панă.

Вăкăрсене кӳлме вĕрентес тĕлĕшпе Храмов тата Д. Толстов юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем тăрăшнипе паянхи куна 8 вăкăра кӳлме вĕрентнĕ.

Колхоз кӳлме вĕрентнĕ вăкăрсемпе пур ĕçсенче те усă курать. Вĕсемпе çураки ĕçĕсенче те анлăн усă курма палăртнă.

А. ШИНЖАЕВ.
П. ТИХОНОВ

Укерчĕк çинче: Çĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт» колхоз председателĕ М. Ф. Скворцов юлташ. Вăл Хĕрлĕ Çар фондне хăйĕн запасĕнчен 20 пăт тырă панă.

Шайкка тыррисене салатса пĕтермелле мар

Армансенче тырă авăртнăшăн илекен шайкка тырри пĕтĕмпех государствăна каймалла, вăл тырра ытти çĕре расходлама юрамасть. Анчах уйрăм колхозсенче. Хатĕрлев Комиссариачĕн уполномоченнăйĕсем тата колхозри ревизи комиссийĕсем тĕрĕслесе тăманнине пула, шайкка тыррине салатса пĕтернисем те пулаççĕ. Октябрьски районри «Дружба» колхозра арман заведующийĕ Моряков шайкка тыррине 93 пăт салатса янă. Çак ĕçе тĕрĕсленĕ хыççăн, Морякова суда парса, 5 çул хушши тĕрмере усрамалла тунă, вăрланă тырра пĕтĕмпех Моряковран шыраса илсе, государствăна панă. Уйрăм колхозсем 1944 çулта тырă авăртнăшăн шайкка тырриче государствăна пачах та тӳлемен. «Коммунизм» колхозра 114 центнер тырă авăртнăшăн пĕр килограмм тырă та паман. Кутемерти колхозра та 120 центнер тырă авăртнăшăн шайкка тырри пурĕ те 1 центнер кăна панă. Ускассинчи арман заведующийĕ колхозниксенчен сăнăх авăртнăшăн шайкка тырри илмест. Вăл кӳршĕри колхозсенчен те тырă авăртнăшăн 325 килограмм шайкка тырри илмен.

Халĕ шайкка тыррине мĕнле илнине кашни колхозрах тĕрĕслетпĕр. Вăл тырра салатакансене тивĕçлипе айăпламалла пулать.

А. ДМИТРИЕВ.
Октябрьски районри прокурор.

ВĂРЛĂХ СОРТЛАКАН ОБОЗСЕМ ĔÇЛЕМЕ ТЫТĂНЧĔÇ

ЕТЕРНЕ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем вăрлăхлăх тырăсене, пĕтĕмĕшпе илсен, хывса çитерчĕç. Анчах та хăшпĕр тырăсем çитмен колхозсем те пур-ха. Чылай колхозсенче уйрăмăнах пăрса йышши тырăсем çитмеççĕ. Пурĕ 700 центнера яхăн пăрса çитмест. Ун вырăнне ытти тырăсем хывнă. Вĕсене пăрçапа улăштарас тĕлĕшпе нумай колхозсем лайăх ĕçлеççĕ.

Çав вăхăтрах вăрлăхлăх тырăсене сортлас ĕç районра пачах çителĕксĕр пырать. Паянхи кун тĕлне пурĕ те 23.5 процент кăна сортланă. Чăнах та, «Дружба», «Парижская Коммуна», «8-ое марта», «Красный Октябрь», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ. Анчах та «Победитель», Ильич, Чапаев ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те вăрлăхсене сортлас ĕç çителĕксĕр пырать.

Тырăсене сортлас ĕçе хăвăртрах вĕçлес шутпа халĕ районра тырă сортламалли 4 обоз йĕркелерĕмĕр. Кашни обозрах «Триер», «Триумф», клеверотерка тата ытти сортировкăсем те пур. Çак обозсем халĕ çирĕплетнĕ маршрутпа çӳресе пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ.

Вырăнти удобренисене хатĕрлемелли тата уя кăлармалли уйăхлăх пуçланиччен вăрлăхсене пĕтĕмпех тасатса пĕтерессишĕн кашни колхозрах тăрăшса ĕçлемелле.

И. ЛЕПЕШКИН,
Районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн

Ишлей районĕнчи Кипечкасси ялсоветĕнчи колхозсем кăçалхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. Хальхи вăхăтра çитес çулхи çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Кашни колхозах вăрлăх фондне тырă çителĕклĕ уйăрнă.

«Большевик», «Красный танк», «Богатырь» тата «Партизан» колхозсем вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ те ĕнтĕ. Вĕсен пахалăхне тĕрĕслеме районри лабораторие янă. Килес çул вăрлăхлăх участоксем çине акмалли пăрçана, тулла тата урпана алăпа суйлаççĕ. Паянхи куна уя «Большевик» колхоз 750 лав, «Красный танк» колхоз 650 лав, «Богатырь» колхоз 720 лав, «Партизан» колхоз 380 лав тислĕк кăларнă. Ку ĕçре вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ. Вырăнти удобренисене ытларах хатĕрлессишĕн «Большевик» колхозра колхозниксемпе колхозницăсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Кашни хуçалăх хĕл кăçиччен пĕр центнертан кая мар кĕл, 50 килограмран кая мар кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 30 лавран кая мар тислĕк хатĕрлеме обязательство илнĕ.

Кашни колхоза агротехникăллă мероприятисен планне туса панă. Çавăн пекех конюхсене, ферма заведующийĕсене тислĕк хатĕрлеме уйрăм план панă. Çак кунсенчех агротехникăна вĕренмелли кружоксем ĕçлеме тытăнаççĕ.

А. СМИРНОВ,
Колхозри агроном.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 26-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Голландире союзниксен çарĕсем Маас шывĕ тăрăх Тильбургран çурçĕртерехре тата Венло районĕнче çӳрекен тăшман патрулĕсене хирĕç çапăçнă.

Дюрентан (Германи) кăнтăртарахра союзниксем Виндем ялне пырса кĕнĕ, унта çапăçусем пыраççĕ. Моншау — Мальмеди (Бельги) секторĕнче пĕр кун хушши лăпкă тăнă хыççăн, нимĕçсен танкĕсемпе пехоти каçхине Бюллинген çывăхĕнче атака пуçласа янă. Тăшмана пысăк сухату кӳрсе, çав атакăна сирсе янă. Мальмедипе Ставло халĕ те союзниксен аллинчех тăраççĕ.

Льернерен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра союзниксен çарĕсем пăртак чакнă, тăшман Льернерен темиçе миля хĕвеланăçнерехри Гранмениль патне çитнĕ. Рошфора тытса илнĕ хыççăн тăшман Оттонран хĕвелтухăçнерехре союзниксене хĕссе пырать. Марви çывăхĕнче тăшман танкĕпе пехоти атака пуçласа янă та Бастоньрен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре малалла куçнă. Розьер тата Либрамон халĕ тăшман аллинче. Союзниксем тăшман савăлланса кĕнĕ вырăнăн кăнтăр флангĕнче малалла куçнă, тăшманăн атакине сирсе янă. Шомон çывăхĕнче çапăçусем пыраççĕ. Союзниксем Бигонвильтен çурçĕртерехри районра тата Гейдершейдпа Арсдорф районĕнче малалла кайнă. Вăл пунктсене тăшмантан тасатнă. Гейдершейд çывăхĕнче нимĕçсен атакине сирсе янă. Тăшман контратакăсем тунă пулин те. Дикирхран кăнтăртарахра тата хĕвелтухăçнерехре, çавăн пекех тата Эхтернахран кăнтăртарахра союзниксем малалла кайнă.

Декабрĕн 25-мĕшĕнче союзниксен сывлăш-çар вăйĕсем пысăк ĕçсем тунă.

ЛОНДОН, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Италире Ревендăран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре 8-мĕш армири Канада чаçĕсем Росеттăна йышăннă хыççăн Альфонсинерен икĕ мильăра тăраççĕ. Фаэнцăран çурçĕртерехре Навильо каналĕнчен хĕвелтухăçнерехри районта тăшман хирĕç тăрса кĕрешесси пĕтсе ларнă. 5-мĕш арми участокĕнче союзниксен çарĕсен патрулĕсем кăна çапăçнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС) Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 27-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Голландире союзниксен чаçĕсем, малтанхи пекех, Тильбургран çурçĕртерехре, Маас шывĕн хĕрринче тăшман патрулĕсене хирĕç кĕрешеççĕ. Моншау—Мальмеди секторĕнче лăпкă. Ставлоран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, Ла-Глез çывăхĕнче, союзниксем тăшманăн хирĕç тăмалли узелне пĕтерсе лартнă.

Оттонпа Марш хушшинчи районра тăшман вăйлă тапăнса пынă пулин те, союзниксем хăйсен позицийĕсене çирĕп тытса тăраççĕ. Тăшманăн темиçе танкĕпе автомашини Селль еннелле шăтарса кĕрсе кайнă. Союзниксен çарĕсем вĕсемпе çапăçнă та вĕсене каялла чактарнă. Нимĕçсем пур енчен те вăйлăн тапăнса пыраççĕ пулин те, Бастонь хули союзниксен аллинчех. Хулана кĕрсе кайма хăтланакан тăшман танкĕсене нумай пĕтернĕ. Бастоньрен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Кобревиль хули хĕррине çитнĕ. Шомонран çурçĕртерехре çапăçусем пыраççĕ.

Бастоньрен кăнтăртарахра Олланж тата Тентанж хулисене тăшмантан тасатнă. Союзниксен çарĕсем Арсдорф çывăхĕнче çапăçаççĕ, вĕсем Лютцельгаузена пырса кĕнĕ. Эшдорфра çапăçусем пыраççĕ. Тăшман унта, танкосемпе пехотăна çапăçăва хутшăнтарса, вăйлăн хирĕç тăрать. Кеменпа Рингель патĕнче те вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Союзниксем Эппельдорфран хĕвеланăçнерехре Дикирхран 4,5 мильăра ларакан çӳллĕ вырăна çитнĕ. Алле таврашĕнче тăшман тунă контратакăна сирсе янă. Союзниксен çарĕсем Вальдбиллика йышăнса илнĕ. Эхтернахран кăнтăртарахри районра та малалла кайнă.

Союзниксен çарĕсем Виссенбургран хĕвеланăçнерехри Тури Вогезăн кăнтăр пайĕнчи вăрманлă районта пăртак малалла кайнă. Тăшманăн Тан хулине хирĕç тунă атаки ăнăçсăр пулнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çар объекчĕсене вĕçсе пырса тапăннă. Çавăн пекех тата тăшманăн тылри çулйĕрĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Италире, 5-мĕш армин секторĕнче тата Серкьо шывĕн айлăмĕнче, тăшман вăйлă атакăсем тунине пула, союзниксен малти чаçĕсем малтанах хатĕрлесе хунă позицисем çине чакнă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем çапăçнă.

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНТĔНЧЕ АМЕРИКĂН ÇАР ПОЛИЦИЙĔ ГЕРМАНИ ДИВЕРСАНЧĔСЕНЕ ТЫТАТЬ

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин американецсен 1-мĕш армийĕ çумĕнчи специальнăй корреспонденчĕ çапла çырать: нумаях пулмасть Америка çарĕсем тăракан вырăна американецсен çар руководителĕсене вĕлерме ятарласа тунă нимĕç отрячĕ кĕрсе кайнă. Вăл отрядра Америка формине тăхăнса союзниксен автоколоннипе пĕрлех пынă çынсем тата парашютпа пăрахнă темиçе çын пулнă. Американецсен çар формине нимĕçсем тыткăна лекнĕ Америка офицерĕсенчен тытса илнĕ, офицерĕсене хăйсене персе пăрахнă.

Нимĕçсен ятарласа тунă çав отрячĕ Америка çарĕсем тăнă çĕре вăрттăн пырса кĕнĕ хыççăн американецсен çар полицийĕ тата ытти органсем те вăл отрядăн пысăк пайне ярса тытнă.

Çак отряд ятарласа тунă диверси батальонĕсен пĕр пайĕ шутланать. Çавăн пек отрядсене нимĕçсем хальхи контрнаступлени вăхăтĕнче Америка çарĕсен тылне антарнă. Çав диверси отрячĕсене нимĕçсем икĕ уйăх каярах туса хунă. Американецсен аслă офицерĕсене вĕлерме задани илнĕ отряда Берлин çывăхĕнче ятарласа пухнă курсра вĕрентсе хатĕрленĕ.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Хĕвелтухăç Боснире Биелина—Челич секторĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Унта тăшмана пысăк çухатусем кӳреççĕ. Нимĕçсен чаçĕсем Корай патнелле татса тухасшăн пулнă, анчах вĕсен атакисене пурне те сирсе янă. Босна шывĕ улăхĕнче нимĕçсен чаçĕсем çапăçăва танксем чылай кĕртсе янă, вĕсем Зеницăран Травник хули еннелле атакăсем пуçласа янă. Нимĕçсен атакисене пурне те сирсе янă, тăшмана малтанхи позицисем çине хăваласа янă.

Черногорире Югославипе Албани чаçĕсем Тара шывĕн тури юхăмĕн улăхĕнче нимĕçсен группировкине пĕтерессишĕн çапăçаççĕ.

Герцеговинăра нимĕçсемпе усташсем Широки Бриегран Посушье еннелле кайма тăнă, анчах та вĕсен атакисене, пысăк çухатусем кӳрсе, сирсе янă.

Хорватире, Копривница хули секторĕнче, Югослави чаçĕсем нимĕçсен вăйлă тĕреклетнĕ опорнăй пункчĕсем пулса тăракан Клоштар, Калиновац тата Фердинандовац хулисене тытса илнĕ.

Словенире нимĕçсен чаçĕсем Штайер облаçĕн ирĕке кăларнă территорине хĕсĕнсе тухасшăн çапăçаççĕ.

БЕЛГРАД, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Хĕвелтухăç Боснире Биелина хулипе Челич хули секторĕнче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Унта нимĕçсем çав хуласем хушшинчи çулсене туртса илессишĕн хаяр атакăсем тăваççĕ.

Черногорире Матешево хули районĕнче нимĕçсен колоннине пуçĕпех пĕтерсе тăкнă. Ку секторти сапаланса пĕтнĕ нимĕç чаçĕсен пурнăçĕ йывăрланнăçемĕн йывăрланса пырать.

Герцеговинăра нимĕçсем Мостар хулинчен тухса атака тума хăтланнă, анчах вĕсен атакине сирсе янă. Уна шывĕн тури тăрăхĕнче Югослави чаçĕсем тăшманăн Горни Лапац тата Добро Село ялĕсем патне пымалли темиçе тĕреклетнĕ пунктне пĕтерсе лартнă. Горни Лапац тата Добро Село ялĕсене йышăннă.

Словенире нимĕçсем. Штайер облаçĕн ирĕке кăларнă территорине тухма хăтланса, çаплах атакăсем тăваççĕ. Уйрăмах вăйлă çапăçусем Мозилье хулипе Горни Град секторĕнче пыраççĕ. Югослави чаçĕсем Камник хулине атакăлама тăнă нимĕçсен колоннине çĕмĕрсе тăкнă.

ВЕНГРИРЕ ХАЛĂХĂН ВĂХĂТЛĂХ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ТУНИ ÇИНЧЕН ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕНЧЕ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Венгрипе Америкăн демократишĕн кĕрешекен совечĕ» Венгрире Вăхăтлăх Правительство тунине хăй ырлани çинчен пĕлтернĕ.

«Эпир,—тенĕ вăл,—Венгрин ирĕке кăларнă çĕрĕ çинче Венгри халăхĕ суйланă ассамблея демократиллĕ Вăхăтлăх Правительство туса хунине саламлатпăр».

Венгрин Вăхăтлăх Правительствине Германие хирĕç вăрçă пуçлама чĕнсе, «Венгрипе Америкăн демократишĕн кĕрешекен совечĕ» çапла каланă. «Пирĕн союзник Совет Союзĕ нацистсене Венгрирен хăваласа кăларать, союзлă ытти нацисемпе пĕрле пирĕн пĕрлехи тăшмана татăклăн çапса çĕмĕрет. Америкăра пурăнакан венгерсем пурте Венгри халăхне демократиллĕ ирĕклĕхсем илме, Венгрири политикăллă пурнăçран реакциллĕ фашистла çынсене хăваласа кăларса ответ тыттарма пулăшма тăрăшаççĕ. Пĕчĕк нацисене хирĕç, еврейсемпе рабочисене хирĕç йышăннă фашистла законсене пурне те пăрахăçа кăлармалла. Венгри халăхĕн, феодаллă йĕркесене яланлăха пăрахăçласа, çĕрсĕр тăрса юлнă хресченсене çĕр касса памалла».

БУДАПЕШТРИ ЛАРУ-ТАРУ

ДЕБРЕЦЕН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Будапешт гарнизонĕн командующийĕ пичетлесе кăларнă приказра çапла каланă: Венгри столици «йывăр вăхăт» тӳссе иртерет, çавăнпа та халăх «çирĕп йĕркеллĕ тата дисциплинăллă пулмалла», тенĕ. Командующи асăрхаттарнă тăрăх, «хăрушă хыпарсем саракансене вырăнтах персе пăрахмалла». Хула çыннисене каçхине 5 сехет хыççăн урама тухма юрамасть. Карательнăй отрядсемпе патрульсене «шанчăксăр» çынсене вырăнтах персе пăрахма хушнă.

«Хĕреслетнĕ çĕмрен» текен фашистла организацирен карательнăй отрядсем туса хунă. «Хăравçăсемпе йĕркелĕхе пăсакансене» хирĕç кĕрешме вĕсене питĕ пысăк право панă.

«ОБСЕРВЕР» ХАÇАТ ПОЛЬША ХАЛĂХĔН ИРĔКЛĔХ КОМИТЕЧĔ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Обсервер» хаçатăн специальнăй корреспонденчĕ çапла çырать: «Лондонра Польшăн çĕнĕ правительствине туса хунă хыççăн Польшăри поляксем хушшинче, çавăн пекех тата Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчипе Англири поляксен ушкăнĕсем хушшинче партиллĕ хирĕçӳсем çивĕчленсе кайрĕç. Олашки вăхăтра пулса иртнĕ кризисăн пĕр результачĕ çакă пулчĕ: Люблинри Комитетăн шанчăкĕ, Лондонри правительствăн шанчăкĕпе танлаштарсан, нумай ӳсрĕ. Франции Вăхăтлăх Правительстви Люблинри Комитета Польшăри чăн-чăн власть тесе йышăнма шутларĕ. Çав вăхăтрах вăл Лондонри правительствăпа та дипломатиллĕ çыхăну тытать. Парижра Люблинри Комитетăн представителĕ Ендриховский пулать. Ку таранччен вăл Люблинри Комитетăн Совет Правительстви çумĕнчи представителĕ пулса ĕçленĕ. Франци Правительствин решенийĕ паллă вырăн йышăнса тăрать. Ку таранччен союзниксен пур правительствисем те (вырăс правительствисĕр пуçне) Польшăн Лондонри правительствине çеç йышăнса тăнă. Франци Правительстви халь çав çултан пăрăнать. Чехсем, çавăн пекех, тен, норвежецсем те, союзниксен Европăри ытти правительствисем те, французсем тунă пек тăвĕç».

Грецири лару-тăру

ЧЕРЧИЛЛЬПЕ ИДЕН АФИНЫ ХУЛИНЕ ПЫНА

ЛОНДОН, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 25-мĕшĕнче каçхине Афины хулинче çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

«Черчилльпе Иден паян Афины хулине çитнĕ. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕпе Александер фельдмаршалпа, союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи вăрçă ĕçĕсен главнăй штабĕ çумĕнчи министр-резиденчĕпе Гарольд Макмилланпа тата Англин Грецири посолĕпе Липерпа канашланă хыççăн вĕсем Греци премьер-министрне Грецин политикăллă шухăшне анлăн палăртма пултаракан конференци пухасси çинчен пĕлтернĕ. Çав конференцин Грецири тăвана тăван вĕлерекен вăрçа пĕтерсе хумалла, пĕрлешӳллĕ нацисем хушшинче Греције каллех хăйĕн вырăнне йышăнма май памалла. Çав конференцие пыма ЭЛАС-ăн Центральный Комитетне те чĕннĕ. ЭЛАС делегачĕсене никам тĕкĕнмелле мар документсем пама пулнă. Афины хулинчи Дамаскинос архиепископ çав конференцире председатель пулма килĕшнĕ».

Конференци декабрĕн 26-мĕшĕнче кăнтăрла пуçланмалла. ЭЛАС енчен виççĕ е тăватă делегат уйăрса яма хушнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтернĕ: паян кăнтăрла Афины хулинче конференци уçăлнă. Вăл конференцире Черчилль, ЭЛАС («Халăхăн ирĕклĕх фрончĕн» çар организацийĕ) делегачĕсем, Софулис, Грецин хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Пластирас тата ыттисем те пулнă. Вĕсене Папандреу тата конференцире председатель пулса ертсе пынă Дамаскинос архиепископ чĕннĕ. Лару Черчилль сăмах тухса каланипе уçăлнă. Çавăн хыççăн, грексем ыйтăва хăйсем сӳтсе явма пултарччăр тесе Англи представителĕсем тухса кайнă. Каярах, Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, конференцие США-н Грецири посолĕ тата Совет Союзĕн çар наблюдателĕ Попов полковник пырса кайни паллă пулнă. Лондонри радион корреспонденчĕ шутланă тăрăх, конференци темиçе куна пымалла. Çав корреспондентах тата паян кăнтăрла Афины хулинче кунĕпех артиллерирен персе тăни çинчен пĕлтернĕ.

АФИНЫ ХУЛИНЧИ КОНФЕРЕНЦИ

ЭЛАС ДЕЛЕГАЧĔСЕМ ЫЙТНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, ЭЛАС делегачĕсем çĕнĕ сĕнӳсем кăларса тăратнă. Вĕсем халь тата Греци правительствинче ЭЛАС-а 40—50 процента çити вырăн пама тата шалти ĕçсен министрĕн вырăнне пама ыйтнă.

ЭЛАС делегачĕсем çаксене тума ыйтнă: 1) полиципе обществăллă учрежденисене тасатмалла, жандармерие салатса ямалла; 2) çĕнĕ правительство туса хумалла, правительство пуçлăхĕ халăх шанакан çын пултăр; 3) ытти партисем хирĕç каламаççĕ пулсан, регент уйăрса лартмалла; 4) тăшман майлă тата патриотсене хирĕç ĕçленĕ çынсене наказани памалла; 5) хальхи событисен пуçламăшĕнче туса хунă наци гвардине салатса ярса, ăна урăхла йĕркелесе ямалла, тинĕс-çар чаçĕсене те урăхла йĕркелемелле; вăл чаçсенчи офицерсен корпусне тасатмалла.

ЭЛАС делегачĕсем çавăн пекех тата Греци королĕ пирки пулмалли плебисцита февраль уйăхĕнчи пĕррeмĕш вырсарникун туса иртерме ыйтаççĕ. Вăл ĕçе пĕтĕм тĕнчери делегаци сăнаса тămалла. ЭЛАС представителĕсем ЭЛАС-а шалти ĕçсен министрĕн, юстици министрĕн тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ вырăнĕсене пама ыйтаççĕ.

Греци правительстви хăй ЭЛАС ыйтнисене сӳтсе явма пуçлани çинчен пĕлтернĕ. Çав вăхăтрах халăх партийĕн (монархиллĕ парти) делегачĕсем—çак сĕнӳсене йышăнма май çук, тесе каланă. Пластирас генерал çапла каланă: «Çав сĕнӳсене йышăнсан, эпĕ Грецирен тухса каятăп», тенĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерствин Афины хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине Афины хулинчи конференци малалла ĕçленĕ. Конференцие тата темиçе политикăллă деятеле чĕннĕ.

Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Афины хулинче çапăçусем çĕрĕпех пынă. Скоби генералăн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Афины хулипе Пирей районĕсенчи тĕреклетнĕ вырăнсене тасатас ĕçре Англи çарĕсем çĕнĕ çитĕнӳсем тунă. Вĕсем темиçе çынна тыткăна илнĕ тата хĕçпăшалпа боеприпассем туртса илнĕ. Эппирте «Зервас генералăн чаçĕсем, ЭЛАС чаçĕсем хĕссе пынине пула, каялла чакаççĕ».

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио каçхине пĕлтернĕ тăрăх, Афины хулинчи конференци хăйĕн ĕçĕсене пĕтернĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио паян каçхине пĕлтернĕ тăрăх, Афины хулинче пулса иртнĕ конференцире Грецире регент уйăрса лартасси çинчен пурте пĕрсаслăн йышăннă. Конференци делегачĕсем вăл ĕçе тăвас вăхăт пирки кăна килĕшеймен. Нумайĕшĕ регента халех уйăрса лартма сĕннĕ.

ФРАНЦИПЕ ПОЛЬША ХУШШИНЧИ ĔÇСЕМ

Люблина Христиан Фуше господин çитнĕ. Вăл Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ çумĕнче Франци Республикин Вăхăтлăх Правительствин представителĕ пулса ĕçлет.

Стефан Ендриховский господин Парижа çитнĕ. Вăл унта Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн представителĕ пулса ĕçлет.

ИТАЛИПЕ БЕЛЬГИ ПĔР-ПĔРИНПЕ ДИПЛОМАТИЛЛĔ ÇЫХĂНУ ТЫТМА ПУÇЛАНИ

РИМ, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: çак кунсенче Италипе Бельги правительствисем пĕр-пĕринпе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçлама килĕшнĕ. Çывăхри вăхăтрах Бельги посолĕ Рима, Итали посолĕ Брюсселе тухса каймалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
декабрĕн 29-мĕшĕпе 30-мĕшĕнче
КАНТĂРЛА
ачасен сеансĕсене иртерет.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16 сехетре.
КАÇХИНЕ
акăлчансен саслă, илемлĕ
«ЛЕДИ ГАМИЛЬТОН»
ятлă фильмне кăтартаççĕ.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
18, 20, 22 сехетре.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04200 Типография № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.